27-мӗш çул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944 ДЕКАБРЬ 15 ЭРНЕКУН 244(6739) №

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛАСОВЕЧӖН ХАÇАЧӖ

Колхоз çамрӑкӗсен йӗлтӗрлӗ ӑмӑртӑвӗ

Пирӗн çӗршывра йӗлтӗр спорчӗ анлӑн сарӑлнӑ. Вӑл вӑрçӑ ӗçӗнче те пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Ана эпир Отечественнӑй вӑрçӑ çулӗсенче лайӑх туйса илтӗмӗр. Çавӑнпа пӗрлех йӗлтӗр спорчӗ сывлӑха çирӗплетмелли май пулса тӑрать. Çавӑнпа совет çамрӑкӗсем йӗлтӗр спортне юратаççӗ.

Çамрӑксене физкультура ӗçне анлӑн явӑçтармалли майсенчен пӗри вӑл — йӗлтӗрлӗ ӑмӑртусем ирттерни пулать. Иртнӗ çулта ВЛКСМ Центральный Комитечӗ тата физкультурӑпа спорт ӗçӗсен Пӗтӗм Союзри Комитечӗ йышӑннӑ тӑрӑх, колхоз çамрӑкӗсен Пӗтӗм Союзри йӗлтӗрлӗ ӑмӑртӑвӗ пулса иртрӗ. Çав ӑмӑртӑва нумай пин колхоз çамрӑкӗсем хутшӑнчӗç. Сӑмахран, иртнӗ хӗлте колхозсем хушшинче иртнӗ ӑмӑртӑва пирӗн республикӑра 23 пин çын хутшӑннӑ. Вӗсенчен 20.318 çын ГТО нормисене панӑ. Çавӑн пекех районсем хушшинчи ӑмӑртӑва 3680 çын, республикӑра мала тухассишӗн иртнӗ ӑмӑртӑва 11 команда хутшӑннӑ. Пӗрремӗш вырӑна Етӗрне районӗнчи Партин 17-мӗш съезчӗ ячӗпе тӑракан колхозри йӗлтӗрçӗсем тухнӑ. Вӗсене физкультурӑпа спорт ӗçӗсен Пӗтӗм Союзри комитечӗ парнесем тата Хисеплӗ грамота парса награждӑланӑ.

Иртнӗ çулхи ӑмӑртусем пирӗн республикӑра лайӑх йӗлтӗрçӗсем пуррине кӑтартса пачӗç. Хӗрлӗ Чутай районӗнчи колхозница Удикова юлташ 3 километра 14 минута та 05 секундӑра чупса тухнӑ. Удикова юлташа ВЛКСМ Центральный Комитечӗн Хисеплӗ грамотипе тата физкультурӑпа спорт ӗçӗсен Пӗтӗм Союзри комитечӗн 1-мӗш степень дипломӗпе награждӑланӑ. Чкаловски район çамрӑкӗ Белкин юлташ республикӑри ӑмӑртура 10 километра 50 минута та 12 секундӑра чупса тухнӑ.

Йӗлтӗрçӗсен ӑмӑртӑвне ирттернӗ май йӗлтӗр пирӗн республикӑра 300 колхозра çӗнӗрен физкультура коллективӗсем тунӑ.

ВЛКСМ Центральный Комитечӗ тата физкультурӑпа спорт ӗçӗсен Пӗтӗм Союзри комитечӗ 1944—45 çулсенчи хӗллехи вӑхӑтра колхоз çамрӑкӗсен Пӗтӗм Союзри йӗлтӗрлӗ ӑмӑртӑвне ирттерме йышӑннӑ. ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ йӗлтӗрçӗсен ӑмӑртӑвне республикӑра ирттерес енӗпе срокӗсем кӑтартса пачӗ. Колхоз çамрӑкӗсен йӗлтӗрлӗ ӑмӑртӑвне колхозсенче—январӗн 10-мӗшӗччен, районсенче—январӗн 25-мӗшӗччен, республикӑра — февралӗн 5-мӗшӗччен ирттермелле.

ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ ВЛКСМ Обкомне тата республикӑри физкультурӑпа спорт комитетне йӗлтӗрçӗсен ӑмӑртӑвне ирттерме халех хатӗрленме тытӑнма тата ӑмӑртӑва колхоз çамрӑкӗсене анлӑн явӑçтармалла тума хушрӗ. Ӑмӑртӑва лайӑх хатӗрленсе ирттерни колхозсенче йӗлтӗр спортне малалла сарса пыма тата яшти çамрӑксен сывлӑхне лайӑхлатма пулӑшӗ.

Комсомол райкомӗсен тата физкультурӑпа спорт организацийӗсен вӑхӑта вӑраха ямасӑрах ӑмӑртӑва ирттерме хатӗрленме тытӑнас пулать. Чи малтанах. оргкомитетсем тумалла. Вӗсем вара ӑмӑртӑва ирттерес ӗçе организацилесе ертсе пыракансем пулса тӑма тивӗçлӗ.

Иртнӗ çулхи опыт çакна кӑтартса парать: ӑмӑртӑва ирттерме вӑхӑтра хатӗрленменни е тата ӑмӑрту хӑй геллӗн иртесси çине шанса тӑни пӗтӗм ӗçе начар тӗслӗхсемпе вӗçлесси патне илсе пыма пултарать. Иртнӗ çулта Йӗпреç, Пӑрачкав, Куракино районӗсенче ӑмӑртӑва хатӗрленес ӗçе тивӗçлипе йӗркелемен пирки колхоз çамрӑкӗсен ӑмӑртӑвне те ирттерейман.

Йӗлтӗрçӗсен ӑмӑртӑвне ирттерме хатӗрленес ӗçе физкультура активне общественнӑй инструкторсене анлӑн явӑçтармалла. Ӑмӑртӑва ирттерме хатӗрленес тени вӑл — çамрӑксене йӗлтӗрпе çӳреме вӗрентмеллине, йӗлтӗрпе çӳреме вӗрентекен мастерсене хатӗрлемеллине йӗлтерет. Ялсенчи физкультура коллективӗсен совечӗсен председателӗсем тата комсомол организаци секретарӗсем валли семинарсем ирттермелле, ӑмӑрту условийӗсене мӗнпур колхоз çамрӑкӗсем патне çитермелле.

Иртнӗ çулта йӗлтӗрçӗсен ӑмӑртӑвне ирттерме хатӗрленнӗ тапхӑрта пирӗн республикӑри чылай районсенче, сӑмахран, Чкаловски, Шӑхасан, Сӗнтӗр, Советски районсенче, вырӑнти йӗлтӗрсем тӑвассине анлӑн организацилемен. Кӑçал та çав паха пуçарӑва сарса пымалла, колхозсенче йӗлтӗрсем тӑвас ӗçе халех пуçармалла.

Колхоз çамрӑкӗсен йӗлтӗрлӗ ӑмӑртӑвне ирттерес тӗлӗшпе комсомолпа физкультура организацийӗсем партипе совет тата общественнӑй организацисенчен пулӑшу илме тивӗçлӗ.

Комсомолпа физкультура организацийӗсене халех çакна асӑрхаттарма кирлӗ: мала тухассишӗн хыпӑнса, ӑмӑртӑвӑн пахалӑхне чакарма юрамасть. Ӑмӑрту итогӗсене ӑмӑртӑва хутшӑннӑ çамрӑксем ГТО нормисене мӗн чухлӗ панине шута илсе, çамрӑксене йӗлтӗрпе çӳреме мӗнле вӗрентнине, физкультура организацийӗсен пӗтӗм ӗçне шута илсе хаклаççӗ.

Колхоз çамрӑкӗсен йӗлтӗрлӗ ӑмӑртӑвӗ мухтавлӑ Хӗрлӗ Çар 27 çул тултарнипе пӗр вӑхӑтра иртет. Çав чаплӑ куна вӑрçӑ ӗçне лайӑх вӗреннипе кӗтсе илесси—çамрӑксен яланхи паха туйӑмӗ пулса тӑрать. Иккӗленмелли çук, комсомолпа физкультура организацийӗсем Хӗрлӗ Çар вуншне боевой резервсене лайӑх хатӗрленипе кӗтсе илӗç.

СССР Совнаркомӗнче

1944 çулта пысӑк тухӑçлӑ тырпул туса илессишӗн тата колхозсенче выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗçе вӑйлатассишӗн облаçсем, крайсем тата республикӑсем хушшинче пынӑ Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑвӑн итогӗсем çинчен

1944 çулта пысӑк тухӑçлӑ тырпул туса илессишӗн тата колхозсенче выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗçе вӑйлатассишӗн облаçсем, крайсем тата республикӑсем хушшинче пынӑ Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑвӑн итогӗсене пӑхса тухса, ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ тырпул пухса кӗртмелли, çӗртмесем тумалли, кӗрхи тырӑсем акмалли тата кӗрхи çӗртме тумалли плансене тултарассишӗн, колхозсенче выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тата унӑн тухӑçлӑх-не хӑпартас тӗлӗшри чи лайӑх результатсемшӗн пынӑ социализмлӑ ӑмӑртура 1944 çулхи октябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне çак облаçсемпе республикӑсем мала тухнӑ тесе палӑртнӑ тата çапла йышӑннӑ:

ПЫСӐК ТУХӐÇЛА ТЫРПУЛ ТУСА ИЛЕССИШЕН ПЫНА АМАРТУ ЕНЕПЕ

1. Çаксене Оборонӑн Государственный Комитечӗн куçса çӳрекен Хӗрлӗ Ялавӗсене тата укçан премисем парас:

пӗрремӗш премисем: Мускав облаçне. Украина ССР-ӗнчи Киев облаçне,

иккӗмӗш премисем: Ленинград облаçне, Калинин облаçне, Украина ССР-ӗнчи Полтава облаçне.

2. Тырпулсене пухса кӗртес, çӗртмесем тӑвас, кӗртыррисене акас тата кӗрхи çӗртме тӑвас енӗпе çаксем лайӑх ӗçленине палӑртас: Азербайджан ССР, Архангельск, Брянск, Вологда, Горький, Иваново, Новгород тата Псков облаçӗсем, Якут АССР, Украина ССР-ӗнчи Днепропетровск, Каменец-Подольск тата Сталино облаçӗсем.

КОЛХОЗСЕНЧЕ ВЫЛЬАХ-ЧЕРЛЕХ ЕРЧЕТЕС ЕÇЕ ВАЙЛАТАССИШЕН ПЫНА АМАРТУ ЕНЕПЕ

1. Çаксене Оборонӑн Государственный Комитечӗн куçса çӳрекен Хӗрлӗ Ялавӗсене тата укçан премисем парас:

пӗрремӗш премисем: Мускав облаçне, Тула облаçне,

иккӗмӗш премисем: Азербайждан ССР-не, Дагестан АССР-не, Казах ССР-ӗнчи Гурьев облаçне.

2. Колхозсенче выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗçе вӑйлатассишӗн çаксем лайӑх ӗçленине палӑртас: Армян ССР, Грузин ССР, Таджик ССР, Туркмен ССР, Астрахань, Архангельск, Иваново, Калинин тата Ярославль облаçӗсем, Якут АССР, Казах ССР-ӗнчи Караганда облаçӗ.

1944 çулта пысӑк тухӑçлӑ тырпул туса илессишӗн тата колхозсенче выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗçе вӑйлатассишӗн районсем хушшинче пынӑ Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑвӑн итогӗсем çинчен

1944 çулта пысӑк тухӑçлӑ тырпул туса илессишӗн тата колхозсенче выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗçе вӑйлатассишӗн районсем хушшинче пынӑ Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑвӑн итогӗсене пӑхса тухса, ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ тырпул пухса кӗртмелли, çӗртмесем тумалли, кӗртыррисем акмалли тата кӗрхи çӗртме тумалли плансене тултарассишӗн, колхозсенче выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тата унӑн тухӑçлӑхне хӑпартас тӗлӗшри чи лайӑх результатсемшӗн пынӑ социализмлӑ ӑмӑртура 1944 çулхи октябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне çак районсем мала тухнӑ тесе палӑртнӑ тата çапла йышӑннӑ:

1. Пысӑк тухӑçлӑ тырпул туса илессишӗн пынӑ ӑмӑрту енӗпе

Çаксене Оборонӑн Государственный Комитечӗн куçса çӳрекен Хӗрлӗ Ялавӗсене тата укçан премисем парас:

Мускав облаçӗнчи Коломна районне,
Мускав облаçӗнчи Коммунистически района,
Горький облаçӗнчи Богородск районне,
Горький облаçӗнчи Котовски района,
Калинин облаçӗнчи Краснохолмски района,
Чӑваш АССР-ӗнчи Вӑрнар районне,
Мари АССР-ӗнчи Горно-Марийски района,
Новгород облаçӗнчи Боровичи районне,
Киров облаçӗнчи Лальски района,
Ульяновск облаçӗнчи Лужски района,
Молотов облаçӗнчи Верхне-Муллински района,
Саратов облаçӗнчи Маркс районне,
Украина ССР-ӗнчи Полтава облаçӗнчи Градижски района,
Туркмен ССР-ӗнчи Марыйски района,
Архангельск облаçӗнчи Шенкурски района.

2. Колхозсенче выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗçе вӑйлатассишӗн пынӑ ӑмӑрту енӗпе

Çаксене Оборонӑн Государственный Комитечӗн куçса çӳрекен Хӗрлӗ Ялавӗсене тата укçан премисем парас:

Мускав облаçӗнчи Кунцево районне,
Тула облаçӗнчи Ленински района,
Азербайджан ССР-ӗнчи Исмаиллъски района,
Дагестан АССР-ӗнчи Лакски района,
Казах ССР-ӗнчи Ново-Богатински района,
Армян ССР-ӗнчи Степанавански района,
Грузин ССР-ӗнчи Тетрицкаройски района,
Калуга облаçӗнчи Перемышльски района,
Киргиз ССР-ӗнчи Тогуз-Торовски района,
Архангельск облаçӗнчи Холмогорски района,
Иваново облаçӗнчи Вичугски района,
Ярославль облаçӗнчи Ярославль районне,
Вологда облаçӗнчи Пришекснински района,
Украина ССР-ӗнчи Киев облаçӗнчи Переяслав-Хмельницки района,
Таджик ССР-ӗнчи Шахристански района.

ССР Союзӗн орденӗсемпе медалӗсене пани

1944 çулхи декабрӗн 12-мӗшӗнче Шупашкарта СССР Верховный Совет депутачӗ. Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ **З. А. Андреева** юлташ автомобиль çулӗсене тунӑ çӗрте тата çав çулсене юсаса тӑрас ӗçсенче Правительство заданийӗсене ӑнӑçлӑн пурнӑçланӑшӑн наградӑланӑ çынсен ушкӑнне Правительство наградисене пачӗ.

«Красная звезда» орденне çул участокӗн начальникӗ **Л. П. Коломоец**, ВКП(б) Чӑваш Обком секретарӗн промышленноçпа транспорт енӗпе ӗçлекен заместителӗ **М. И. Репкин**, ВКП(б) Етӗрне райкомӗн секретарӗ **А. В. Сомов** юлташсем илчӗç.

«Знак почета» орденне ВКП(б) Обкомӗн промышленноçпа транспорт отдел заведующийӗн заместителӗ пулнӑ **Д. Ф. Дубинин**. ВКП(б) Куславкка райкомӗн секретарӗ **Г. М. Крючков**, ВКП(б) Çӗрпӳ райкомӗн секретарӗ **Д. Я. Митьков**, ВКП(б) Калинино райкомӗн секретарӗ пулнӑ **Ф. П. Романов**, **А. М. Соловьев** тата **Л. Г. Лазутин** юлташсем илчӗç.

«За трудовую доблесть» медале **В. И. Власов, М. И. Сосновский, Д. Н. Филиппов**, производство отделӗн начальникӗ **В. В. Шеин** юлташсем илчӗç.

«За трудовое отличие» медале Промбанкӑн Чӑваш конторин управляющийӗ **А. Г. Григорьев**, Шӑхасан районӗнчи Чкалов ячӗпе тӑракан колхоз председателӗ **М. Н. Дубровин**, Тӑвай районӗнчи «Красная Чувашия» колхоз колхозникӗ **П. К. Кондратьев**, Элӗк районӗнчи «Çутталла» колхоз колхозници **У. С. Нилова**, Калинино районӗнчи «Чӑваш Коммуни» колхоз колхозникӗ **Е. П. Прокопьев**, Советски районри Калинин ячӗпе тӑракан колхоз колхозникӗ **Т. С. Савельев**, **Н. М. Шоршун** юлташсем илчӗç.

Награда илнисем хӑйсен ӗçӗсене пысӑка хурса хакланӑшӑн Правительствӑна тав турӗç, малашне тата лайӑхрах ӗçлеме сӑмах пачӗç.

Юлашкинчен З. А. Андреева юлташ награда илнисене награда илнӗ ятпа саламларӗ, малашне ӗçре тата пысӑкрах ӳсӗмсем тума сунчӗ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

ДЕКАБРӖН 12-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Декабрӗн 12-мӗшӗнче пирӗн çарсем Венгрире **МИШКОЛЦ** хулинчен çурçӗртерехре тата çурçӗр-хӗвеланӑçнерехре çулсен паха узелӗ тата шахтӑсемпе руда районӗ пулса тӑракан **ШАЙ-СЕНТ-ПЕТЕР** хулине çапӑçса туртса илнӗ, çавӑн пекех тата, тӑшманпа çапӑçса, **ХАЙНАЛОШ, ХЕДЬМЕГ, ДАМАК, ЗИЛИЗ, СИРАК, КОПАСФЕЛД, БЕРЕНТЕ, АЛАЧКА, ИСБАНУ, ВАРБО** ялӗсене йышӑннӑ.

БУДАПЕШТ хулинчен çурçӗр-хӗвелтухӑçнерехре пирӗн çарсем вӑйлӑ çапӑçнӑ хыççӑн **ГЕДЕЛЛЕ** хулипе узловой чугун çул станцине тытса илнӗ, çавӑн пекех тата **БОКОР, ЛОЦ, РИМОЦ** ялӗсене йышӑннӑ.

Декабрӗн 10-мӗшӗпе 11-мӗшӗнче Венгрире **УКРАИНАРИ** 2-мӗш фронт çарӗсем нимӗçсемпе венгерсен 1.850 салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ, çапла вара наступленин 7 кунӗнче, декабрӗн 5-мӗшӗпе 11-мӗшӗ хушшинче, **УКРАИНАРИ** 2-мӗш фронт çарӗсем **БУДАПЕШТ** районӗнче тата çурçӗртерехре нимӗçсемпе венгерсен 7.450 салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведчиксем шыраса çӳренӗ тата чылай пунктсенче тӗллӗн-тӗллӗн çапӑçнӑ.

Декабрӗн 11-мӗшӗнче пирӗн çарсем нимӗçсен 43 танкне çӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри çапӑçусенче тата зениткӑй артиллери тӑшманӑн 32 смолетне персе ӳкернӗ.

ДЕКАБРӖН 13-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Декабрӗн 13-мӗшӗнче **ВЕНГРИРЕ** пирӗн çарсем **МИШКОЛЦ** хулинчен çурçӗртерехре тата çурçӗр-хӗвеланӑçнерехре çапӑçса, **КАЖМАРК, КЕНДИ, ТОМОР, ЛАК, АБОД, БАЛАЙТ, ФИНКЕ, МУЧОНЬ, ШАЙО-КАЗИНЦ, АЛШО** ялӗсене тата **ХАЛМАЙ, ФИНКЕ, БАРЦИКА** чугун çул станцийӗсене тытса илнӗ.

БУДАПЕШТ хулинчен çурçӗр-хӗвелтухӑçнерехре пирӗн çарсем **СУРДОКПЕШПЕКИ, БЕЛАХАЛОМ, ЧЕЧЕ, КУТАШО, НОГРАД-ШИПЕК, ГЕД, КИШАЛАГ, ИШАСЕГ** ялӗсене тата **СУРДОКПЕШПЕКИ, ЧОМАД, ИШАСЕГ** чугун çул станцийӗсене тытса илнӗ.

Декабрӗн 12-мӗшӗнче пулса иртнӗ çапӑçусенче **ВЕНГРИРЕ МИШКОЛЦ** хулинчен çурçӗртерехри тата **БУДАПЕШТ** хулинчен çурçӗр-хӗвелтухӑçнерехри районсенче Украинӑри 2-мӗш фронт çарӗсем нимӗçсемпе венгерсен 1.700 салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведчиксем шыраса çӳренӗ тата чылай пунктсенче тӗллӗн-тӗллӗн çапӑçнӑ.

Декабрӗн 12-мӗшӗнче пирӗн çарсем нимӗçсен 29 танкне çӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри çапӑçусенче тата зениткӑй артиллери тӑшманӑн 11 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Мишколц хулинчен çурçӗртерехре пирӗн çарсем, тӑшманпа çапӑçса, малалла тапӑнса пынӑ. Пӗр соединени боецӗсем нимӗçсене вӑйлӑ çирӗплетнӗ позицисенчен хӑваласа кӑларнӑ та, малалла куçса, Сендрьо хулинчен 5 километр хӗвелтухӑçнерехре тӑракан Абод ялне туртса илнӗ. Пирӗн çарсем Шайо шывӗ улӑхӗпе малалла куçса пынӑ, тӑшманпа çапӑçса, халӑх пурӑнакан темиçе пункта туртса илнӗ. Кун каçиччен 300 нимӗç салтакӗпе офицерне çити пӗтерсе тӑкнӑ, тӑшманӑн 6 танкне персе çӗмӗрнӗ.

* * *

Будапешт хулинчен çурçӗр-хӗвелтухӑçнерехре çаплах вӑйлӑ çапӑçусем пынӑ. Тӑшман хӑйӗн Будапешт хулине пырса кӗмелли вырӑнсене хӳтӗлекен çарӗсене таттисыпписӗр çӗнӗ чаçсем хушса парса вӑйлӑлатать. Тӑшман контратакисене сире-сире ярса, совет пехотинецӗсем, танксемпе артиллери пулӑшнипе, утӑм хыççӑн утӑм малалла куçса пыраççӗ. Паян çапӑçусем хыççӑн пирӗн çарсем Будапешт хулинчен 11 километрта ларакан Кишалаг ялне туртса илнӗ. Ишасег ялӗпе чугун çул станцийӗшӗн питех те хаяр çапӑçусем пулса иртнӗ. Тӑшман çак пунктра хирӗç тӑмалли вӑйлӑ çирӗплетнӗ узел туса хунӑ. Станци тавра нимӗçсем дотсемпе дзотсем нумай туса тултарнӑ, вӗсем патне пымалли вырӑнсенче минӑсем лартса тултарнӑ. Совет чаçӗсем çав тери хӑвӑрт атака пуçласа янӑ. Гитлеровецсем пӗтӗм вӑйпа хирӗç тӑнӑ, вӗсем кирек мӗнле пулсан та çав лайӑх позицисене хӑйсен аллинчех хӑварма тӑрӑшнӑ, анчах та вӗсене çӗмӗрсе тӑкнӑ, вара вӗсен ирӗксӗрех каялла чакмалла пулнӑ. Ишасегшӑн пынӑ çапӑçура пирӗн çарсем нимӗç пехотине икӗ батальон пӗтерсе тӑкнӑ тата вӗсен 8 танкне çунтарса янӑ. Нимӗçсенчен 9 тупӑ, 46 пулемет, 28 миномет, 400 винтовкӑпа автомат ытла тата ытти трофейсем те тытса илнӗ.

* * *

Хӗвелтухӑç Пруссире гитлеровецсен отрячӗсем хӑшпӗр участоксенче совет позицисене разведка туса пӗлме хӑтланнӑ. Пирӗн малти стрелковӑй подразделенисем нимӗçсене вӑхӑтра асӑрханӑ та, вӗсене пӑшалсемпе тата пулеметсемпе персе сапаласа янӑ. Тӑшман пехотине пӗр ротӑна çити пӗтерсе тӑкнӑ. Унсӑр пуçне, пирӗн снайперсем 49 нимӗçе вӗлернӗ. Совет истребителӗсемпе штурмовикӗсем, бомбӑсем пӑрахса, тупӑсемпе тата пулеметсемпе персе, тӑшманӑн 2 паровозне, 10 вагонне тата 25 автомашинине пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Остраленка хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑçнерехре совет разведчикӗсен ушкӑнӗ тӑшман тылне пырса тухнӑ. Совет боецӗсем кун каçипех нимӗçсен оборонине вӗренсе выртнӑ. Каç пулсан, вӗсем фронт патӗнчи çул çинче засада тунӑ.

Часах çав çулпа нимӗçсен обозӗ пыни курӑннӑ. Разведчиксем обоз хуралне тапӑннӑ та темиçе нимӗçе вӗлернӗ, ыттисене тыткӑна илнӗ. Çӗрле пирӗн боецсем каялла хӑйсен чаçӗ тӑракан вырӑна таврӑннӑ.

* * *

Михальовце хулинчен хӗвеланӑçнерехре пирӗн подразделенисем, артиллеристсемпе минометчиксем персе хӳтӗлесе тӑнипе, нимӗçсем тӑракан вырӑна вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ. Алӑ вӗççӗн тытӑçса илнӗ хыççӑн, совет боецӗсем тӑшман траншейӗсене тата унӑн оборонин тӗреклетнӗ пунктне туртса илнӗ. Хӑйсен çухатнӑ позицийӗсене каялла туртса илме хӑтланса, нимӗçсем резерв илсе пынӑ та темиçе контратака тунӑ. Пирӗн подразделенисем тӑшман контратакисене пурне те сирсе янӑ. туртса илнӗ позицисене хӑйсен аллинчех тытса тӑраççӗ. Нимӗçсенчен 11 тупӑ, 7 миномет тата икӗ тягач тытса илнӗ. Тыткӑна илнисем пур.

* * *

Çурçӗр флочӗн карапӗсем тӑшманӑн икӗ подводнӑй лодкине шыва путарнӑ.

* * *

Нимӗçсен 271-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 978-мӗш полкӑн 2-мӗш ротинчен тыткӑна лекнӗ унтер-офицер Иоганн Ферд çапла каласа кӑтартнӑ: «271-мӗш пехотнӑй дивизине çак çулхи çуркунне Францире пухса йӗркелерӗç, вӑл хӗвеланӑç фронтӗнчи çапӑçусенче кӗрешрӗ. Нумаях пулмасть, дивизие хӗвеланӑç фронтӗнчен Чехословакири Трнава хули районне илсе килчӗç. Кунта дивизи чаçӗсене çӗнӗ вӑйсем хушса пачӗç. Пур подразделенисене те çӗнӗ автоматсемпе пулеметсем пачӗç. Ноябрь уйӑхӗн вӗçӗнче дивизие Венгрие илсе килчӗç. Дивизире 977-мӗш, 978-мӗш, 979-мӗш пехотнӑй полксем, 271-мӗш артиллери полкӗ тата специальнӑй подразделенисем пур. Фронтра пире çапла каларӗç: дивизи задачи—позицисене çирӗп хӳтӗлесе тӑрасси, каялла пӗр утӑм та чакма юрамасть, терӗç. Кӑнтӑрла та, çӗрле те эпир яланах хатӗр тӑтӑмӑр. Анчах та, апла пулин те, вырӑссем хӑйсен наступленине труках эпир асӑрхиччен пуçласа ячӗç. Вырӑссен артиллерийӗ пеме пуçласан, салтаксем хӑраса пӑтранса кайрӗç, пирӗн çапӑçури ретсем йӗркерен тухрӗç. 2-мӗш ротӑри салтаксем нумайӗшӗ, окопсене кӗрсе тарса, çӗр çумне сыпçӑнса выртрӗç, пуçа çӗклеме те хӑрарӗç. Эпир çапла выртнӑ хушӑра вырӑссем пирӗн окопсене вӑркӑнса кӗрсе кайрӗç те пире тыткӑна илчӗç».

САРАТОВПА МУСКАВ ХУШШИНЧИ ГАЗОПРОВОД

Геологи экспедицийӗсем Саратов облаçӗнче çӗр айӗнче питӗ нумай газ пуррине пӗлнӗ. Çӗр айӗнчен тухакан газ вӑл чи йӳнӗ топливо пулса тӑрать. Унпа Мускавра тата ытти хуласенче усӑ курӗç.

Правительство 1945 çулта Саратовпа Мускав хушшинче газопровод тума йышӑннӑ. Газопровод тума тата ытти пулӑшуллӑ предприятисем тума укçа нумай каять пулин те, Мускава 800 километр инçӗшӗнчен илсе пыракан газ Мускав патӗнчи çӗркӑмрӑкӗнчен икӗ хут йӳнӗрех, нефтьрен пӗр хут çурӑ йӳнӗрех, вутӑран икӗ хут йӳнӗрех пулать.

Саратовпа Мускав хушшинче газопровод туса пӗтерсен, Мускавра газпа усӑ курасси 5 хут ӳсет. Темиçе вунӑ пин хваттер вара газ илме пуçлаççӗ, нумай çуртсене газпа хутма тытӑнаççӗ. Çӑкӑр завочӗсем, больницӑсем, мунчасем, прачечнӑйсем, наука институчӗсем тата шкулсем те газ илме пуçлаççӗ. Промышленность предприятийӗсемпе электростанцисене газ ытларах пама пуçлаççӗ.

Газопровод тӑвас тӗлӗшпе тата хулара çуртсене газ кӗртес тӗлӗшпе нумай ӗçлемелле пулать. Çавӑнпа пӗрлех пурӑнакан çуртсенчи, мунчасенчи, прачечнӑйсенчи, сыватакан тата ытти тӗрлӗ учреждениссенчи хутмалли хатӗрсене çӗнӗлле йӗркелесе ямалла пулать. Мускавра ятарласа хӑйне уйрӑм строительнӑй организаци тӑваççӗ.

Газопровод туни пирӗн çӗршывра пысӑк газ промышленноçӗ тума пуçлани пулса тӑрать. (ТАСС).

Совет Союзӗпе Чили Республики хушшинче дипломатиллӗ çыхӑнусем йӗркелесе ячӗ

Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗпе Чили Республики хушшинче дипломатиллӗ çыхӑнусем йӗркелесе ярасси çинчен тата пӗр-пӗрин патне дипломатиллӗ представительсем ярасси çинчен Чили Республикин правительстви сӗннине Совет правительстви йышӑннӑ. Икӗ правительство çак ыйтупа калаçса татӑлнине Совет Союзӗн США-ри посолӗ А. А. Громыко тата Чили республикин США-ри посолӗ Мора господин пӗр-пӗрин патне янӑ нотӑсенче çирӗплетсе панӑ. Çав нотӑсене декабрӗн 11-мӗшӗнче Вашингтонра пӗр-пӗрне панӑ.

Мора господин СССР посолне А. А. Громыкона çакӑн пек нота панӑ:

«Чили республики Пӗрлешнӗ Нацисемпе пуринпе те хӗрӳллӗн çыхӑнтарса тӑракан туслӑ çыхӑнусене сыхласа хӑварма тата вӑйлатма шутлать.

Çакна асра тытса тата Сирӗн превосходительствӑн Правительстви ырӑ кӑмӑллӑ пулнине пӗлсе, Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗн правительствипе Чили Республикин правительстви хушшинче йӗркеллӗ дипломатиллӗ тата консуллӑ çыхӑнусем туса хунине тата пӗр-пӗрин патне Чрезвычайнӑй тата Полномочнӑй посолсем янине манӑн Правительство питӗ лайӑх ӗç пулӗччӗ тесе шутлать.

Хамӑн Правительство тивӗçлӗ йӗркепе полномочи панипе усӑ курса, мӗнпур инструкцисене пӑхӑнса, эпӗ Чили правительствипе Совет Союзӗн правительстви хушшинчи çӳлте асӑннӑ дипломатиллӗ тата консуллӑ çыхӑнусем йӗркеленсе кайнине çак нотӑпа çирӗплетсе паратӑп. Çак нота паянтан пуçласа тивӗçлипе вӑя кӗрет».

Мора господина А. А. Громыко çакӑн пек ответлӑ нота панӑ:

«Сирӗн нотӑна илни çинчен пысӑк кӑмӑлпа пӗлтеретӗп. Эсир вӑл нотӑра Чили республикин Правительстви Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗпе йӗркеллӗ дипломатиллӗ тата консуллӑ çыхӑнусем тума шутлани çинчен пӗлтеретӗр. Эпӗ Сире çакна пӗлтерме ирӗк илтӗм: манӑн правительство, Чили Республикин правительстви шутланӑ пекех шутласа, Чили республикипе дипломатиллӗ тата консуллӑ çыхӑнусем йӗркелесе яма тата пӗр-пӗрин патне Чрезвычайнӑй тата Полномочнӑй посолсем яма килӗшет».

Де Голль генерал Бакуран тухса кайни

БАКУ, декабрӗн 13-мӗшӗ. (ТАСС). Паян Баку хулине специальнӑй поездпа Франци республикин Вӑхӑтлӑх Правительствин Пуçлӑхӗ де Голль генерал, Ют çӗршывсен Ӗçӗсен Министрӗ Ж. Бидо господин тата вӗсемпе пӗрле каякан çынсем çитнӗ. Вокзалта вӗсене Азербайджан ССР правительствин представителӗсем тата Баку хулин вырӑнти влаçӗсен представителӗсем хирӗç тухса кӗтсе илнӗ.

12 сехет те 30 минутра де Голль генерал, Ж. Бидо господин тата вӗсемпе пӗрле килнӗ çынсем совет самолечӗ çине ларса Тегерана тухса кайнӑ. Де Голль генералпа пӗрле Совет Союзӗн Францири посолӗ А. Е. Богомолов вӗçсе кайнӑ.

Аэродромра вӗсене Азербайджан ССР правительствин представителӗсем тата Баку хулин вырӑнти влаçӗсем ӑсатса янӑ. Ӑсатса янӑ чухне хисеплӗ хурал тӑратнӑ, Франци республикин тата Совет Союзӗн гимнне каланӑ. Аэродрома Франци республикин тата Совет Союзӗн флагӗсене çакса илемлетнӗ.

Мускавран Баку хулине çитиччен де Голль генералпа Ж. Бидо господина СССР Наркоминделӗн представителӗсем Ф. Ф. Молочковпа А. Г. Кулаженков тата Оборона Халӑх Комиссарначӗн представителӗ М. П. Кутузов ӑсатнӑ.

Де Голль генерал Тегерана çитнӗ

ТЕГЕРАН, декабрӗн 13-мӗшӗ. (ТАСС). Франци республикин Вӑхӑтлӑх Правительствин Пуçлӑхӗ де Голль генерал, Ют çӗршыв Ӗçӗсен Министрӗ Ж. Бидо господин тата вӗсемпе пӗрле каякан çынсем паян 15 сехетре Тегеран хулине самолетпа вӗçсе çитнӗ.

Аэродромра де Голль генерала Совет Союзӗн Иранри посолӗ М. А. Максимов, посольство советникӗ И. И. Авалов, çар атташин помощникӗ Иванов, Франци республикин Иранри посланникӗ, французсен çар атташи, Тегеран генерал-губернаторӗ тата французсен колонийӗн представителӗсем хирӗç тухса кӗтсе илнӗ.

Будапештра хӑраса ӳкнӗ

ГЕТЕБОРГ, декабрӗн 13-мӗшӗ. (ТАСС). «Гетеборгспостен» хаçат çапла çырать: «Будапештран килнӗ тӑватӑ швед каласа панӑ тӑрӑх, унта лару-тӑру калама çук йывӑр. Вырӑнти халӑх, çавӑн пекех тата салтаксем те, хӑраса ӳкнӗ. Швецин Будапештри миссийӗ тӑван çӗршыва таврӑнма приказ илнӗ. Ытти çӗршывсен миссийӗсем те унтан тухса каяççӗ».

Район промышленноçĕпе кооперации промышленноçĕ 1944 çулхи плана пĕтĕмпех тултарма тивĕçлĕ

А. МАТВЕЕВ
Чăваш АССР Совнаркомĕн Председателĕ

Пирĕн çулпуç Сталин юлташ Октябрьти Социализмлă Аслă революци 27 çул тултарни çинчен тунă докладра совет халăхĕ Отечественнăй вăрçăра тунă паттăр ĕçсене пысăка хурса хакланă.

Сталин юлташ çапла каланă: «Совет çыннисем хăйсене кирлĕ нумай япаласене илмесĕр тăчĕç, фронта ытларах пулăшас тесе, материальнăй пурнăç тĕлĕшĕнчен нумай йывăрлăхсене ăнланулăн тӳссе иртерме кăмăл турĕç. Хальхи вăрçăн нимĕнле танлаштарма çук йывăрлăхĕсем совет халăхĕн хурçă пек вăй-хăвачĕпе паттăрлăхне хавшатаймарĕç, татах та ытларах пиçехтерсе çирĕплетрĕç. Пирĕн халăх тивĕçлипех геройла халăх чапне илчĕ».

«Хĕрлĕ Çар, — тенĕ Сталин юлташ, — фашистла çарсене хирĕç нумай вăхăт хушши пĕччен йывăррăн кĕрешсе пырса, вăрçă тĕлĕшĕнчен çĕнтерӳ тунă пекех, совет тылĕнчи ĕççыннисем те, гитлерла Германипе тата унпа пĕр каварлисемпе пĕччен кĕрешсе пырса, тăшмана экономика тĕлĕшĕнчен çĕнтерчĕç». Тăшмана экономика тĕлĕшĕнчен çĕнтерессине совет çыннисен паттăрлăхне пула тунă. Тăван çĕршыв рабочи класĕн, колхоз хресченĕсен тата интеллигенцин паттăр ĕçне яланах асра тытса тăрĕ.

Совет халăхĕ Сталин юлташ докладне ĕç программи вырăнне хурса йышăнчĕ. Аслă çулпуçăн тата учителĕн сăмахĕсем кашни рабочин, хресченĕн, интеллигентăн чĕрине кĕрсе вырнаçрĕç. Митингсемпе пухусенче совет çыннисем хамăр халăха вăрçăн йывăр çулĕсемпе илсе тухнă аслă Сталина чĕререн юратса, тав туни çинчен каласа пачĕç. Совет çыннисем çĕнĕ вăй хутшăннипе туяççĕ, вĕсем гитлерла Германие тĕпĕ-йĕрĕпех пĕтерсе тăкма мĕн кирлисене пурне те тума хатĕр.

1944 çул вĕçлениччен шутлă кунсем юлчĕç. Çак чаплă çулталăка государство плансене ăнăçлăн тултарнипе вĕçлес тесен, хальхи тапхăрта халăх хуçалăхĕн мĕнпур отраслĕсенчи руководительсемпе работниксен хăйсен пĕтĕм вăйĕсене пухса ĕçлемелле. Уйрăмăнах районсемпе кооперации промышленность работникĕсен тата вырăнти советсен руководителĕсен вăйлăн ĕçлемелле, мĕншĕн тесен вĕсем, пĕтĕмĕшпе илсен, куллен кирлĕ таварсем кăлармалли плана халĕ ăнăçлăн тултарса пыраймаççĕ-ха.

Чăн та, вырăнти промышленноçпа апат-çимĕç промышленноçĕнче тата кооперации промышленноçĕнче малта пыракансем 1944 çулхи плана срокченех тултарнă. Районсенчи предприятисемпе промысла кооперации артелĕсенчен 39-шĕ çулталăкри плана срокчен тултарса, планран иртерсе 8.255 пин тенкĕлĕх продукци пачĕç. Иртнĕ 11 уйăхри плана 67 предприятипе артель ăнăçлăн тултарнă. Сывăх кунсенчех çулталăкри плана тата 20 предприятипе артель тултарса çитерессĕ.

Пирĕн республикăри районсенчи апат-çимĕç промышленноçĕ çулталăкри плана, пĕтĕмĕшпе илсен, октябрь уйăхĕнче тултарса çитернĕ. Ĕçре çавăн пек пахалăх кăтартнăшăн апат-çимĕç промышленноçне РСФСР-ти облаçсемпе республикăсен ăмăртăвĕнче виççĕмĕш премИ панă. Çулталăкри плана срокчен тултарассишĕн пыракан чаплă ăмăртура Кувакино. Çĕмĕрле районĕсенчи апат-çимĕç комбиначĕсен. Канашпа Улатăр тата Шупашкар хулисенчи апат-çимĕç комбиначĕсен. Тăвай. Кувакино, Шуркасси. Вăрмар промкомбиначĕсен тата чылай артельсен работникĕсем палăрчĕç. Анчах та районсенчи промышленноçăн чылай предприятийĕсем, промысла кооперацие инвалидсен кооперации артелĕсем нумайĕшĕ кăçал начар ĕçлерĕç. Районсенчи промкомбинатсем те, пĕтĕмĕшпе илсен, 11 уйăхри плана тултарса çитереймерĕç. Çулталăкри плана пĕтĕмпех тултарса çитермелле тăвас тесен, вĕсен декабрь уйăхĕнче 800 пин тенкĕлĕх продукци туса кăлармалла. Ку хисеп уйăхри планран ытларах шутланать. Çапах та, вăйсене ӳстерсе ĕçлесен, промкомбинатсем çавăн чухлĕ продукци туса кăларма пултараççĕ. Çавна тума Вырăнти промышленность Халăх Комиссариачĕн тата районсемпе хула совет исполкомĕсен председателĕсен предприятисемпе артельсене практикăллă пулăшу памалла.

Чăвашпромсоюз артелĕсем кăçал иртнĕ çулхинчен лайăхрах ĕçлерĕç. Анчах вĕсем те 11 уйăхри плана тултарса çитереймерĕç. Чăвашпромсоюз системинче Шупашкарти «Кожупряжь». Улатăрти «Красная звезда», «24 лет Октября». Вăрнарти «Красный кустарь». Куславкка районĕнчи Киров ячĕпе тăракан тата ытти чылай артельсем плана тултараймаН. Вăл артельсенче производствăна техника тĕлĕшĕнчен лайăх механизациленĕ, чĕрĕ таварсем те кирлĕ таранах пур. Артельсен руководителĕсем ĕçе большевикла организацилесе ертсе пырсан, вĕсем производство планне вăхăтра тултарма пултараççĕ.

Швейпромсоюзпа Древпромсоюз тата тарпромсоюз системисенчи нумай артельсем пачах та çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Асăннă системăсем кăçал 11 уйăх хушшинче 1943 çулхи çав вăхăтри виçерен сахалтарах продукци панă. Союзсен тата районсен руководителĕсен çакна шута илмелле: декабрьпе январь уйăхĕсем çав артельсемшĕн татăклă тапхăр пулса тăраççĕ. Çавăнпа та кашни артелĕн ĕçне тишкерсе тухса, вĕсен ĕçне лайăхлатма татăклă мерăсем йышăнмалла.

Инвалидсен кооперации артелĕсем те хăйсен ĕçне сӳрĕклетрĕç. Коопинсоюз системине кĕрекен артельсенчен 4-шĕ кăна 11 уйăхри плана тата Йĕпреçри «Помощь» артель кăна çулталăкри плана тултарнă. Коопинсоюз системинче пысăк мар артельсем уйрăмăнах юлса пыраççĕ. Мĕншĕн тесен вĕсене вăхăтра пулăшу парса тăмаççĕ. Инвалидсен кооперации артелĕсен ĕçĕнчен Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене те, тата çар çыннисен çемьисене пулăшас ĕçе лайăхлатасси нумай килет. Çавăнпа та Коопинсоюз работникĕсемпе райсовет исполкомĕсен асăннă артельсен ĕçне пур майсемпе те лайăхлатса пымалла тăвас пулать.

Апат-çимĕç промышленность работникĕсем, пĕтĕмпе илсен, начар мар ĕçлеççĕ. Апла пулсан, Сĕнтĕрвăрринчи, Шăмăршăри, Октябрьскинчи тата Йĕпреçри апат-çимĕç комбиначĕсем начар ĕçленипе нимĕнле те килĕшме çук. Мĕншĕн тесен вĕсен лайăх ĕçлеме пур условисем те çителĕклĕ. Çĕнĕрен организациленĕ апат-çимĕç комбиначĕсене хуçалăх тĕлĕшĕнчен çирĕплетес ĕç те вăраха юлса пырать. Уйрăмăнах кунта Чкаловски район пирки каламалла. Вăл пирĕн республикăра кивĕ район шутланать. Унта апат-çимĕç промышленноçне йĕркелеме лайăх условисем пур. анчах та унта çав условисемпе усă курмаççĕ-ха.

Пирĕн республикăри районсенчи кооперации промышленноçĕ, пĕтĕмĕшпе илсен, 1944 çулхи 11 уйăх хушшинче, сутмалли хакпа шутласан. 30 миллион тенкĕлĕх ытла продукци параймаН. Районсемпе кооперации промышленность предприятийĕсенче çак тĕлĕшпе законсене пăснисем те пулнă. Хăшпĕр артельсен тата промысла кооперации союзĕсен руководителĕсем, плана иртерсе тултарнипе мухтанас шутпа, улшăнман фактсене ӳстереççĕ. вĕсем вырăнне сутмалли хаксемпе усă кураççĕ. Тĕрĕслени хыççăн çакна палăртнă: Чăвашдревпромсоюз артелĕсем тата унăн председателĕ пулнă Андреев 1944 çулхи 8 уйăх хушшинче, çав майпа усă курса, плана тултарнин хисепне 675 пин тенкĕ чухлĕ ӳстерсе кăтартнă. Çавăн пекех Чăвашпромсоюз системи те 758 пин тенкĕ чухлĕ ытларах кăтартса панă. Пĕр продукцие икĕ хутчен шута илнисем те пулнă.

Çавăн пек ултавлă йăласене халех пĕтермелле. Плана тултарнине ӳстерсе кăтартакан предприятисемпе артельсен руководителĕсене çирĕп ответ тыттармалла. Халăх Комиссарĕсемпе промысла кооперации союзĕсен руководителĕсен производствăра продукцие мĕнле шута илнине тăтăшах тĕрĕслесе тăмалла, вырăнти работниксене практикăллă пулăшу памалла. Районсенчи план отделĕсен тата статистика управленийĕн инспекторĕсен производство планне тултарнине мĕнле шута илнине пĕрмаях тĕрĕслесе пымалла.

Пирĕн предприятисемпе артельсенчен чылайĕшĕсем, хăшпĕр чухне Халăх Комиссариачĕсемпе промысла кооперации союзĕсем ирĕк панипе, плана иртерсе тултарасшăн тăрăшса, тума çăмăлтарах продукцисене ытларах кăлараççĕ. Вырăнти чĕр таварсен пуянлăхĕсемпе усă курас ĕçрен хăтăлас шутпа, ĕççыннисем панă материалсенчен таварсем ытларах тума тăрăшаççĕ. Ку тĕлĕшпе Шупашкарти вăрман промысла артелĕ палăрнă. Вăл вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе пачах ĕçлемест. Çав вăхăтрах хăйĕн йывăç çуракан икĕ заводĕнче те ытти организацисем панă материалсене çурать. Çакна пула вара плана тултарасси тата ĕççыннисене сутма куллен кирлĕ таварсем кăларасси начар пулса пырать.

Хамăр республикăра тума май пур таварсене туса кăларманнипе килĕшме çук. Республикăри кашни районах хăйне кирлĕ таран обоз хатĕрĕсем, катка-пичкесем, лаша кӳлмелли хатĕрсем, çăматăсем тата ытти чылай таварсем туса кăларма, тумтирсемпе атă-пушмак юсассине йĕркелеме тивĕçлĕ.

Продукци пахалăхĕ те çителĕксĕр-ха. Промкомбинатсемпе артельсен хăшпĕр таварсене туса кăларас енĕпе халĕ те техникăллă условисем çук. Туса кăларакан таварсем çине маркăсем лартмаççĕ. Сутуилӳ Халăх Комиссариачĕ брак кăларакансемпе килĕшсе тăни начар пахалăхлă продукци кăларакансене кăна пулăшать. Çакăн пек йĕркесĕрлĕхсене халех пĕтермелле. Вырăнти советсен тата промысла кооперации союзĕсен, Вырăнти промышленноçпа Апат-çимĕç промышленность Халăх Комиссариачĕсен çав ĕçре большевикла йĕркелĕх тумалла.

Районсемпе кооперации промышленноçĕнчи работниксен ĕçе тĕрĕс организацилес тата кадрсем хатĕрлес енĕпе нумай ĕçлемелле. Çак ĕçĕн ăнăçлăхĕ. чи малтанах, Халăх Комиссариачĕсемпе союзсен руководителĕсенчен килет. Вĕсен малта пыракан предприятисемпе стахановецсен опытне сармалла, йывăр ĕçсене механизацилемелле, рабочисемпе мастерсен, предприяти руководителĕсен квалификацине ӳстерме пулăшмалла. Анчах та вăл тĕлĕшпе халĕ çителĕксĕр ĕçлеççĕ-ха. Тĕрĕссипе илсен, ăмăртура мала тухнă предприятисенче те нормăна тултарайман рабочисем чылай. Ĕç укçи фондне ытлашши расходлани те пулнă. Çапла, промысла кооперации системинче 1944 çулхи 9 уйăх хушшинче ĕç укçи фондне 150 пин тенкĕ ытлашши расходланă. Ку таранччен пĕр промкомбинатпа артель те талăкри графикпа ĕçлесси çине куçман.

Хăшпĕр предприятисемпе артельсенче ĕç дисциплини начар. Шăмăршă районĕнчи промкомбинатра управляющи пулса ĕçленĕ Карпов эрни-эрнипе ĕçе тухмасăр пурăннă, комбинат ĕçне япăхтарнă. Промкомбинатра управляющин примерĕпе хăшпĕр рабочисем 5—6 кун ĕçе тухмасăр пурăннă. Кăçалхи çул комбинатран 45 çын хăйĕн ирĕкĕпе тухса кайнă. Çак йĕркесĕрлĕхсем райсовет исполкомĕн куçĕ умĕнче пулса пынă.

Районсемпе промысла кооперации промышленноçĕ ăнăçлăн ĕçлесси вĕсене районсемпе хула совет исполкомĕсем тата ВКП(б) райкомĕсемпе хула комитечĕсем мĕнле ертсе пынинчен килет. Анчах та çак ĕçе пур çĕрте те кирлĕ пек туса пыраççĕ теме çук-ха. Производство планне тултарасси Ишлей, Çĕмĕрле, Шăмăршă, Етĕрне, Çĕрпӳ тата ытти хăшпĕр районсенче начар пырать. Асăннă районсенчи предприятисемпе артельсем 11 уйăхри плана тултарман. Апла пулин те, райсовет исполкомĕсен председателĕсем хăйсен предприятийĕсемпе артельсен ĕçĕпе пачах интересленмеççĕ, вĕсене пулăшмаççĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕ ялсенче промкомбинатсем организацилесси çинчен постановлени йышăннăранпа çурçул иртрĕ ĕнтĕ. Вăл ĕçе пурнăçа кĕртни государствăпа халăхшăн питех те кирли пуриншĕн те паллă. Апла пулин те, çав ыйтупа пĕр районта та тивĕçлипе ĕçлеме тытăнман-ха. Хĕллехи вăхăтра пирĕн кашни районрах ялсенче промкомбинатсем организацилемелле.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ 1944 çулхи ноябрĕн 22-мĕшĕнче кăларнă постановлени тăрăх, райсовет исполкомĕсем промкомбинатсемпе артельсене туртăм вăйĕ уйăрса пама тивĕçлĕ. Çак постановление кашни райсовет исполкомĕнех вăхăтра пурнăçа кĕртсе пымалла. Промкомбинатсемпе артельсен руководителĕсен колхозсемпе таччăн çыхăнса тăрса, уйăрнă туртăм вăйĕпе туллин усă курма тăрăшас пулать.

1945 çулхи январь уйăхĕнче районсемпе кооперации промышленноçĕнчи активăн республикăри канашлăвне иртерме палăртнă. Унта 1944 çулхи ĕç итогĕсене тата 1945 çулхи задачăсене сӳтсе-явмалла. Çав канашлу пуçаниччен предприятисемпе артельсен руководителĕсен, стахановецсемпе тата ударниксемпе пĕрле, социализмлă договорсене, обязательствăсене мĕнле пурнăçа кĕртнине тĕрĕслемелле, çĕнĕ договорсем тумалла. 1945 çулхи плана тултарма май паракан мероприятисене палăртса хумалла.

ТЫЛРИ ПАТТĂРЛĂХ

...Игнатий Тимофеевич Тимофеева гражданла вăрçинче амантнă. Суран часах «тӳрленнĕ», çирĕм пĕр çул хушши вăл хăй çинчен сайра хутра аса илтернĕ.

— Каплах пулсан пит аванччĕ!—тенĕ Игнатий Тимофеевич.—Суран. чир-чĕр тавраш. пуринчен ытларах, ĕç тума паманнине тарăхтарать, ыратнипе мар...

Виçĕм çул, шăп хир ĕçĕ вăхăтĕнче, манăçа тухнă суран сасартăк, çирĕм пĕр çул хушши вăрттăн вăй пухнă тăшман пек, сиксе тухнă. Вăл часах Игнатий Тимофеевичăн икĕ урине те, çыхса лартнă пек, вылятмалла мар туса ярать. Игнатий Тимофеевич юĕтмен çĕртен йывăр инвалид пулса каять.

— Аçта ĕçлĕн капла колхоз председателĕнче? Пăрахас пулĕ. — тет Тимофеев юлташ.

Анчах куç умĕнче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлекен çынсем. хĕрӳ ĕç вăхăчĕ тăнă; шурăла пуçланă пула фронтран радиопа тата хаçатпа килекен хыпарсем çĕмĕрнĕ; çав хушăрах çав хыпарсемех тăшмана хирĕç пыракан çилле вăйлăлатнă, çивĕчлетнĕ, ăшри пĕтĕм вăя, пĕтĕм юна юлашки тумлам таран çĕршывшăн пама хушнă.

— Лаша çине ларăп. ӳпаленсе çӳрĕп. анчах — ĕçлеме пăрахмăп!—шухăшланă Игнатий Тимофеевич. — Суранлă çынсем эпĕ çеç мар. чылай вĕсем; йывăр пулсан та, ĕçлеме пăрахмаççĕ. хăйсене йывăрри çинчен те калама юратмаççĕ—пĕлеççĕ: вăхăчĕ çапла... чи хăклишĕн, чи пахишĕн — тăван çĕршыв телейĕшĕн çапăçатпăр...

Çапла вара Игнатий Тимофеевич, «КИМ» колхоз председателĕ, хăй ĕçне пăрахмарĕ, хаяррăн çĕкленнĕ сурана та парăнмарĕ...

Унтанпа ĕнтĕ икĕ çул иртрĕ. «КИМ» колхоз пĕлтĕр те, кăçал та, унчченхи çулсенчи пекех, чи ырă ятлă колхозсен хисепĕнче. Кăçал вăл уйрăмах вăйлă ĕçлерĕ: çуракипе те, вырса пуçтарассипе те, авăн çапассипе те чи малти вырăнта пычĕ, хальхи вăхăтра чугун çул валли вутă хатĕрлессипе тата вăрçă вăхăтĕнчи тăваттăмĕш çуракине хатĕрленессипе малта пырать. Ĕç çапла пынин секречĕ—ертсе пыраканăн хастарлăхĕнче. вăл колхоз массипе таччăн çыхăнса ĕçленинче, колхоз членĕсем пултарулăхне кашнинех шута илсе, ĕçе тĕплĕн йĕркеленинче, ĕçре те, пурнăçра та председатель ытти членсене пример кăтартнинче.

Колхоз председателĕ хушнисене членсем çур сăмахранах ăнланаççĕ: наряд конкретнăй ĕç тăвакансем патне питĕ кĕске вăхăтра çитет, çавăнтах пурнăçа кĕме пуçланать, мĕншĕн тесен колхозниксен ĕçри тĕп шухăшĕсенчен пĕри: «Никамшăн та мар—хамăршăн», тенĕ шухăш пулса тăрать, вăл ĕçĕн хăвăртлăхне ӳстерет.

Кунта ĕçе тухманни çинчен мар, хушнă ĕçе туса пĕтерсе, правление пырса, тата тепĕр ĕç пама ыйтни çинчен калаçаççĕ.

Акă тĕслĕхрен, председатель патне Евсеев Петр ятлă ватă колхозник пычĕ.

— Ну, юсамалли çунана юсарăм. Халĕ ĕнтĕ вăрман кăларма каяс пулĕ, Игнатий Тимофеевич. — терĕ вăл.

— Юрĕ. Апатне çиме ĕлкĕртĕн-и-ха тулккĕ?..

Чĕлĕм тултарнă майăн пĕрик-виç шӳтлĕ сăмах хушрĕ те Петр Евсеев ĕçе тухса кайрĕ. Вăл тухса кайсанах, Леонтий Викторов. 14—15 çулхи почтальон, почта илсе килнĕ хыççăн, председательтен хăй пуçарса «пĕчĕк» наряд илсе кайрĕ.

Тимофеев юлташ ĕçре пуçарулăх кăтартакансене манмасть те, манма та пултараймасть. Агафия Нилова, Петр Евсеев, Клементий Михайлов, Агафия Яковлева, Иван Михайлов, Макар Григорьев—çак хĕрарăмсемпе çамрăксем тата ваттисем колхозăн пур ĕçĕнче те хăйсене лайăх кăтартнине председатель яланах кирлĕ пек те вырăнлă палăртса пынă: вĕсене бригадирсем вырăнне лартнă, правлени членне суйлама сĕннĕ, премисем панă.

Колхозăн çĕрĕ юнашарти колхозăнни пек мухтамаллах мар пулсан та, вăл кашни çулах государствăна валли те, ĕçкунĕ тăрăх уйăрма та сахал мар тырă ӳстерсе парать. Тислĕк хăй вырăнĕнче—уйра, ăна нихăçан та ял хыçне çеç кайса тăкса, «унтан тасалас-ха», тесе тăмаççĕ, ăçти уя кирлĕреххине кура, тислĕкрен чăнах та усă курас тесе тăкаççĕ. хăш чухне вăл тислĕк 3—4 çухрăмри уя каять.

«КИМ» колхоз халĕ вăрçă вăхăтĕнчи тăваттăмĕш çуракине хатĕрленет. Вăрлăхсене сортланă. плугсене тирпейленĕ, юсанă, урапасем, ут таврашсем хатĕр. выльăх апачĕ çителĕклĕ. лашасене лайăх пăхаççĕ.

— Пирĕн «КИМ» колхоз ĕçне палăртрĕç-ха кăçал: председателе ЧАССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотине пачĕç,—теççĕ колхозниксем.

В. РЗАЙ.

ПЕРВОМАЙСКОЕ.

ЭПИР ГОСУДАРСТВО УМĔНЧЕ ПАРĂМЛĂ МАР

Красноармейски районри «Малалла» колхоз кăçал ялхуçалăх çулне ăнăçлă вĕçлерĕ. Паттăр Хĕрлĕ Çарăн фронтри чаплă çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, колхозниксемпе колхозницăсем ырми-канми ĕçлерĕç. Çĕршыва тата Хĕрлĕ Çара çителĕклĕ апат-çимĕç парас тесе, государство умĕнчи парăмсене срокчен парса татма тăрăшрĕç. Халĕ пирĕн колхоз государство умĕнче парăмлă мар. Эпир пур тĕрлĕ обязательствăсене те парса татнă. Планран иртерсе Хĕрлĕ Çар фондне 1.200 пăт тĕштырă тата 1500 пăт çĕрулми патăмăр. Сĕт-çу, ашкакай парăмĕсене те пĕтĕмпех парса татнă. 1945 çулшăн 33.5 центнер аш-какай, 1252 литр сĕт. 1000 штука çăмарта панă. Колхозниксем хăйсен парăмĕсене те парса татнă.

Пирĕн колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне пĕтĕмпех тултарнă. Выльăхсене хĕл каçарма çителĕклĕ таран апат пур, ферма çуртĕсене те йĕркеленĕ.

Колхоз çитес çуракине хатĕрленме тытăнчĕ. Вăрлăх валли çителĕклĕ тырă уйăрнă. Халĕ вăрлăхсене сортласа тасатас ĕç пырать. Çĕнĕ çулччен пур тĕрлĕ вăрлăхсене те тасатса хума шутлатпăр. Çураки вăхăтĕнче кирлĕ пулакан машинăсемпе плугсене те юсама тытăнтăмăр.

Çуракинче туртăм вăйĕ пысăк вырăн йышăнать. Лашасене пăхас тата вĕсемпе усă курас ĕçре обезличкăна пĕтерес тесе, лашасене уйрăм колхозниксем çумне çирĕплетсе панă. Плугсемпе сеялкăсене юсанипе пĕрлех, транспорт инвентарĕсемпе ут таврашĕсене те юсаççĕ. Паян-ыранах агротехникăна вĕренмелли кружок ĕçлеме тытăнать. Вăл кружока кашни колхозникпе колхозницăна явăçтарма шутлатпăр.

М. СТЕПАНОВ.
«Малалла» колхоз председателĕ.

ВĂРЛĂХ СОРТЛАÇÇĔ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. декабрĕн 14-мĕшĕ. (Телефонпа, хамăр корр.). Районри колхозсем. пĕтĕмпе илсен, вăрлăх фондне хывса çитернĕ. Халĕ нумай колхозсенче вăрлăха сортласа тасатас ĕç пырать. 20 колхоз ытла вăрлăха сортласа пĕтернĕ. Ильич ячĕпе тăракан колхоз пур тĕрлĕ вăрлăхсене те сортласа хунă. Сортланă тырăсен тĕслĕхĕсене районри лабораторине сăнама янă. Çак колхозра 5 çынран ятарласа бригада тунă. Бригада, ирхине ирех тытăнса, сĕм тĕттĕм пуличчен ĕçленĕ. Çапла вара декабрĕн 5-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпех вăрлăхсене тасатса хунă.

Шурча ялсоветĕнчи «Первое мая» колхоза пурĕ 172 центнер вăрлăх кирлĕ,—ăна çавра алапа алаççĕ. Тулă çинче пухра вăррисем нумай, ăна алапа та, сортировкăпа та тасатма çук, çавăнпа алăпа суйлаççĕ.

«Унгăстрой» колхоз та тĕштырă вăрлăхĕсене сортласа пĕтернĕ, анчах кунта вăрлăхлăх клевера халĕ те шĕкĕлчемен.

«Сила», «Пятилетка», «Янмурзино» колхозсем клевер вăрлăхне хăйсем валли кăна мар, ытти колхозсене пама та хатĕрленĕ.

С. ШАДИН.

ХĔРЛĔ ÇАРА ПУЛĂШАС ТЕСЕ...

Колхозниксем халĕ тулли хаваслăхпа пурăнаççĕ. Сталин юлташ Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 27 çул тултарни çинчен тунă доклада Молякри колхоз хресченĕсем те итлерĕç. Ăна колхозниксем хăйсен пуххинче сӳтсе-явнă, пĕрле пухăнса вĕреннĕ. Ăна ĕç фронтĕнче хастарлăхпа паттăрлăх кăтартнă хĕрарăмсем те, арçын ачасемпе хĕрачасем те хаклă япала вырăнне хурса усраççĕ, çулпуçăн кашни сăмахне чĕрере тытса тăраççĕ.

Сталин юлташ, боецсен чаплă ĕçĕсемпе пĕрлех, колхоз хресченĕсем Хĕрлĕ Çара активлăн пулăшнине палăртнă. Çакна Моляк ялĕнчи хресченсем савăнса йышăнчĕç. Вĕсем кăçал мĕнпур ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра пурнăçа кĕртсе пынă. Вăхăтра акса, вăхăтра пуçтарнă. Колхозниксем тырпула пĕлтĕрхинчен малтан çапса тирпейлерĕç. Вĕсем пур ĕçе те лайăх тучĕ. Кĕрхи çĕртме планне тултарнă.

Колхоз государство умĕнчи пур тĕрлĕ парăмсене те пурнăçласа çитернĕ. Аш-какай 1945 çулшăн парса татнă. Çитес çулшăн çупа брынза чылай панă. Планран иртерсе Хĕрлĕ Çар фондне çĕршер пăт тырă тата çĕрулми панă. Колхозниксене ĕçкунĕ пуçне аванс йĕркипе 2,5-шер килограмм çĕрулми тата 2-шер килограмм тырă валеçсе панă.

Выльăх-чĕрлĕх çурчĕсене хĕл валли лайăх хатĕрлесе çитернĕ. Выльăхсем валли апат çителĕклĕ пур. Фермăсенче выльăхсем планпа кăтартнă чухлех пур.

Сталин юлташ докладне колхоз хресченĕсем çитес çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешӳ пуçарса янипе ответлерĕç. Вăрлăх фондне пур культурăсем енĕпе те çителĕклех хывнă, вĕсен пахалăхне районри вăрлăх лабораторийĕнче тĕрĕслеттернĕ. Сеялкăна, плугсемпе сӳресене çураки валли лайăх юсаса хунă. Лаша таврашĕсем кирлĕ чухлех пур. Халĕ вырăнти удобренисене пухаççĕ.

Колхозниксен ĕçри хастарлăхĕ татах çĕкленчĕ. Вĕсем çакăн пек шухăш-кăмăлпа пурăнаççĕ: Берлин çине çĕнтерӳ ялавне çĕклесе лартма Хĕрлĕ Çара мĕнпур вăйран пулăшатпăр, теççĕ.

ЯКОВ СИГАП.

СОВЕТСКОЕ.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, декабрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ декабрĕн 12-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Союзниксен çарĕсем Юлих хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре Рур шывĕ патнелле куçса пыраççĕ. халĕ вĕсем Пир хули урамĕсенче çапăçаççĕ. Малти отрядсем Маркем хули патне çитнĕ. Гей хулинче çаплах çапăçусем пыраççĕ. Союзниксем Штрасс хулине йышăннă.

Диллинген тата Саарлаутерн районĕнче тăшман союзниксен Саар шывĕ çинчи укрепленине хирĕç тĕллĕн-тĕллĕн темиçе контратака тунă. Нимĕçсен контратакисене пурне те сирсе янă. Саргемюнд хулине çаплах тăшмантан тасатаççĕ. Çав хуларан хĕвелтухăçнерехре союзниксен çарĕсем Блисбрюккен хули патне çитнĕ. Союзниксем Саргемюнд хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнелле куçса пынă, вĕсем Римринген хулине пырса кĕресси пĕр миля кăна юлнă. Хагенау хули союзниксен аллинче. халĕ унта тăшманăн хулара юлнă снайперĕсене пĕтереççĕ. Анăçуллă атака тунă хыççăн союзниксем Вальбург хули патне çитнĕ. çав хуларан хĕвелтухăçнерехре ларакан Суфленхейм хулин кăнтăр енчи тулашне çитнĕ.

Вогез тăвĕсем çинче. çавăн пекех тата Танн хули çывăхĕнче союзниксем çĕнĕрен малалла кайнă.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн вăрçă объекчĕсене нумай тĕлте хаяррăн тапăннă.

ЛОНДОН. декабрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ декабрĕн 12-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Италире 5-мĕшпе 8-мĕш армисен чаçĕсен патрулĕсем çеç кĕрешнĕ.

Акăлчансен йывăр бомбардировщикĕсен соединенийĕсем декабрĕн 12-мĕшĕнче тăшманăн Вена тата Грац хулисен районĕнчи (Австри) вăрçă объекчĕсене тапăннă, çавăн пекех тата Югославире хытă çапăçнă.

ЛОНДОН. декабрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Германире союзниксен çарĕсем Юлих хулипе Дюрен хули секторĕнче Рур шывĕ патнелле малалла куçса пынă. Пир. Меркен тата Гофен хулисене туртса илнĕ. Мариавейлер хулинче тăшман хытă хирĕç тăрать. Дерихвейлер хулин урамĕсенче çаплах çапăçусем пыраççĕ. Кунтан кăшт кăнтăртарахра çапăçусем Гей хулинче пыраççĕ.

Союзниксен Саар шывĕ урлă каçнă чаçĕсем тăшманпа Саарлаутерн хулинчен хĕвелтухăçнерехри Фраулаутерн хулинче хаяррăн çапăçаççĕ. Саргемюнд хулинчен 4 миля çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре союзниксен çарĕсем Блис шывĕ урлă каçса кайнă. Габкирхен хулине кĕнĕ. Ку тĕлте Блис шывĕ тăрăх Францпе Германи хушшинчи чикĕ пырать. Хагенау хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре союзниксен чаçĕсем, тăшман арьергарчĕсем хирĕç тăнине çĕнтерсе, Рейн шывĕ улăхĕпе 8 миля малалла кайнă. Вĕсем Мажино линийĕн оборона сооруженийĕсен зонине кĕрсе кайнă та Зельц хули патне çитсе тухнă. Тăшман хирĕç тăрса вăйлă çапăçман. Темиçе вырăнта союзниксен чаçĕсем Францпе Германи хушшинчи чикке тухасси 5 миля кăна юлнă.

Декабрĕн 13-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕ Эссен хулине тапăннă. Çăмăл бомбардировщиксем Оснабрюк хулине тапăннă.

ЛОНДОН. декабрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ декабрĕн 13-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Италире Равенна хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре 8-мĕш армири Канада чаçĕсем. тăшман хытă хирĕç тăнă пулин те, Ламоне шывĕ çинче тăшмана тапăнма икĕ укреплени тунă. Хаяр çапăçу хыççăн, союзниксен çав икĕ укрепление йышăнса тăракан çарĕсем пĕр-пĕринпе пĕрлешнĕ. 5-мĕш армири Англи чаçĕсем Монте Каре тăвĕ çинче тăшманăн хаяр атакине сирсе янă. Союзниксен малти позицисене вăхăтлăха савăлланса кĕнĕ тăшман чаçĕсене каялла ывăтса янă. Фронтăн ытти участокĕсенче тăшман патрулĕсем хытă кĕрешнĕ.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔ ГЕРМАНИЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН. декабрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, декабрĕн 12-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле «Москито» йышши бомбардировщиксен соединенийĕсем Ганновер тата Гамбург хулисене тапăннă. Унсăр пуçне тата Хĕвеланăç Германири вăрçă объекчĕсем çине те бомбăсем пăрахнă. Çак операцисенче акăлчансен пĕр самолечĕ каялла таврăнман.

ЛОНДОН. декабрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: американецсен 1.250 бомбардировщикĕ ытла, 900 истребитель хӳтĕлесе пынипе, Ханау, Дармштадт тата Ашаффенбург хулисенчи чугун çул деповĕсене, çавăн пекех тата Мерзебург хулинчи синтетически горючи заводне тапăннă.

ЛОНДОН, декабрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, декабрĕн 12-мĕшĕнче, кăнтăрла иртсен, Англин «Ланкастер» йышши самолечĕсем, истребительсем хӳтĕлесе пынипе, Рур облаçĕнчи промышленноçпа чугун çул центрĕ пулса тăракан Виттен хули çине вĕçсе пырса тапăннă.

Союзлă пуласси тата пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен Францпе Совет Союзĕ тунă договор пирки ют çĕршывсенчи пичет мĕн çырать

ЛОНДОН. декабрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, «Манчестер гардиан» хаçат, Францпе Совет Союзĕ çĕнĕ договор тунине саламласа, çапла çырать: çак договор Англипе Росси тунă союза çирĕплетет, тет. Хаçат шучĕпе, çак договор «Европăна çĕнĕрен вăрçа кĕртсе яма Германие чăрмантаракан фактсенчен пĕри пулса тăрать.

«Дейли телеграф энд Морнинг пост» хаçат редакци ячĕпе кăларнă статьяра çапла çырать:

«Вырăссемпе французсем тунă союза Англире чĕререн кĕтсе илĕç, мĕншĕн тесен вăл Европăри хăрушсăрлăх системине тĕреклетет., çакă вара вырăссемпе Англи тунă пактăн тĕллевĕ пулса тăрать».

АЛЖИР. декабрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Алжирти радио пĕлтернĕ тăрăх, Францири пичет агентствин политикăллă ĕçсене пăхса тăраканĕ çапла çырать: Францпе Совет Союзĕ тунă договора пичетлесе кăларман пулин те. Парижри официальнăй ушкăнсенче каланă тăрăх, çав договора ССР Союзĕпе Франци алă пусни хăех те тĕнчери чи паллă ĕçсенчен пĕри пулса тăрать. Çав договора коллективлă хăрушсăрлăх тăвас шутпа çырса алă пуснă.

ЛОНДОН. декабрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). АФИ агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Египетри пур хаçатсем те Францпе Совет Союзĕ договор туса алă пусни çинчен пĕлтернине пысăк заголовоксемпе пичетленĕ.

Грецири лару-тăру

АЛЕКСАНДЕР ФЕЛЬДМАРШАЛ АФИНЫ ХУЛИНЕ ПЫНА

ЛОНДОН. декабрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, акăлчансен Грецири хĕçпăшаллă вăйĕсен командующийĕ Скоби генерал декабрĕн 11-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Грецири лару-тăру, пĕтĕмĕшпе илсен, пĕр улшăнмасăрах тăрать. Партизансен çĕнĕ вăйĕсем Афины хулинчи Англи çарĕсем йышăнма ĕлкĕреймен районсемпе хула тулашĕнчи ялсене кĕреççĕ. Декабрĕн 10-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен Афины хулинчен хĕвелтухăçнерехре атака тума пухăнса тăнă партизансен чаçĕсене Англи бомбардировщикĕсем сапаласа янă. Партизансене хăшпĕр çухатусем кӳнĕ.

ЛОНДОН. декабрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Афины хулине Александер фельдмаршал çитнĕ, унпа пĕрле Гарольд Макмиллан пынă. Александер фельдмаршал Скоби генералпа тĕл пулнă.

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). «Нейшел Бродкастинг систем» ятлă радио саракан компанин Афинăри корреспонденчĕ ĕнер çапла пĕлтернĕ: ЭЛАС отрячĕсем пĕтĕм Греције. Пирей çурма утравĕн кăнтăр пайĕсĕр пуçне. контроллесе тăраççĕ. Пирей çурма утравĕн кăнтăр пайĕнче декабрĕн 11-мĕшĕнче Англи чаçĕсем малалла куçса пынă.

ЛОНДОН. декабрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин ют çĕршыв ĕçĕсен министерстви декабрĕн 12-мĕшĕнче каçхине Англин Грецири çарĕсен командующийĕн Скоби генералăн штабĕ панă коммюникене пичетлесе кăларнă. унта каланă тăрăх. Грецири вăрçă ĕçĕсене пĕтерме май паракан условисем пирки сӳтсе-явас тесе. ЭЛАС представителĕ Скоби генерал патне пырса каласнă.

ЭЛАС представителĕ Порфирогенис ыйтнă тăрăх. тенĕ коммюникере. ăна декабрĕн 12-мĕшĕнче ирхине Скоби генерал хăйĕн штабĕнче йышăннă. Порфирогенис хăй ЭЛАС-а ертсе пыракан ЭАМ комитечĕн представителĕ пулни çинчен пĕлтернĕ. Скоби генерал ăна çапла каланă: «пĕрремĕшĕнчен, ЭЛАС чаçĕсем, Казертри килĕшӳ тăрăх эпĕ ертсе пыракан çарсем пулса тăрса, манăн приказсене пурнăçа кĕртсе пымалла. Çав приказсем Аттикăран тухса кайма хушаççĕ., Иккĕмĕшĕнчен, ЭЛАС майлă тăраканнисене пурне те Афинăра тата Пирейра хирĕç тăма пăрахма, хĕçпăшала пире пама хушакан приказсем кăлармалла. Çакна мĕнле тумалли пирки ятарласа приказсем пулаççĕ. ЭЛАС майлă тăракансен чылайĕшĕн ятне лайăх пĕлетпĕр. Хĕçпăшала пĕтĕмĕшпех памасан, асăннă условисем пурнăçа кĕмен тесе шутланать. Виççĕмĕшĕнчен, çак условисене пурнăçа кĕртнĕ хыççăнах, Скоби генерал ун çинчен союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи çарĕсен главнокомандующийне Александер фельдмаршала пĕлтерет, Александер вара Грецири хальхи йĕркесĕрлĕхе пĕтерес тата пур грексем валли те хăйсен демократиллĕ ирĕклĕхĕсемпе мирлĕн усă курма май туса парас тесе тивĕçлĕ ĕçсем тăвĕ. Çакна тăвас тесен, чи малтан, уйрăм ушкăнсем тытса тăракан çарсене пурне те салатса яма кирлĕ».

Скоби генералăн условийĕсене итленĕ хыççăн. Порфирогенис çав условисем çинчен ЭЛАС руководителĕсене пĕлтерме штабран тухса кайнă.

ЛОНДОН. декабрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Афинăран пĕлтернĕ тăрăх, паян ЭЛАС чаçĕсем пысăк тупăсем илсе пынă та акăлчансен штабĕ вырнаçнă района каллех пеме тытăннă. Снарядсем кашни пилĕк минутрах ӳкнĕ. Декабрĕн 12-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле хулан хĕвеланăç хĕррине ЭЛАС отрячĕсем, темиçе çĕр çын кусăкалани курăннă. Англи авиацийĕ вĕсем çине пеме тытăннă.

Кунта пĕлтернĕ тăрăх, фельдмаршал Александер Англин министр-резидентĕпе Макмилланпа пĕрле Афины хулине Скоби генералпа малашне мĕн тăвасси çинчен калаçма пынă. Александер Греције самолетпа пынă, унтан Афины хулине броневикпа кайнă. çав броневика «Шерман» йышши танксем хӳтĕлесе пынă. Александер Афинăран декабрĕн 12-мĕшĕнче ирхине тухса кайнă, вăл Грецире 20 сехетрен те кая пулнă.

Лейбористсен партийĕн конференцийĕнче

ЛОНДОН. декабрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, декабрĕн 11-мĕшĕнче лейбористсен партийĕн ĕç тăвакан комитетне резолюци тăратнă, çав резолюци Англи правительстви Грецире тăвакан ĕçсемпе кăмăлсăр пулни çинчен пĕлтерет тата унта вăрçă ĕçĕсене халех чарса лартма чĕнет. Резолюцире: ирĕке кăларнă çĕршывсен шалти ĕçне хутшăнмалла мар, тенĕ. Çав резолюцие вăрçă вăхăтĕнчи транспорт министерствин парламентри секретарĕ Филипп Ноэль-Бейкер тăратнă.

Ĕнер лейбористсен партийĕн конференцийĕнче Англи Грецире тăвакан ĕçсемпе килĕшменни çинчен пĕлтернĕ. анчах лейбористсене правительствăран тухма хушакан тӳрлетӳве йышăнман. ăна ытларах сасăсемпе сирсе янă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского. 5. Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторан — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 01249 Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. 6. 59Х42 п. л. Тираж 16.000 экз.